25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
МАЙ
8
ЭРНЕКУН
105(6040) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Ҫарӑн начальство тата рядовой составне Совет Союз Геройӗн званине парасси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн ҫаксене, Ленин орденӗпе «Золотая Звезда» медалӗ парса, Совет Союз Геройӗн званине парас:

1. Кӗҫӗн лейтенанта Степан Христофорович **Горобеца**
2. Майора Николай Павлович **Горедничева**
3. Лейтенанта Сергей Федорович **Долгушина**
4. Капитана Василий Васильевич **Ефремова**
5. Майора Василий Александрович **Зайцева**
6. Кӗҫӗн лейтенанта Иван Сергеевич **Зудилова**
7. Кӗҫӗн лейтенанта Салават Хакимович **Карымова**
8. Майора Иван Иванович **Клещева**
9. Капитана Александр Александрович **Кондратюка**
10. Лейтенанта Сергей Васильевич **Макарова**
11. Капитана Иван Иванович **Мещерякова**
12. Политрука Григорий Яковлевич **Моисеенкӑна**
13. Красноармееца Яков Николаевич **Падерина**
14. Капитана Павел Ильич **Пескова**
15. Капитана Гавриил Антонович **Полавцене**
16. Кӗҫӗн лейтенанта Федор Кузьмич **Фака**
17. Кӗҫӗн лейтенанта Андрей Григорьевич **Хвастунова**
18. Кӗҫӗн лейтенанта Николай Степанович **Шевлякова**.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 ҫулти майӑн 5-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Ҫарӑн начальство составне Совет Союз Геройӗн званине парасси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн ҫаксене, **ЛЕНИН** орденӗпе **«ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА»** медалӗ парса, **Совет Союз Геройӗн** званине парас:

1. Политрука Владимир Карпович **Витина**.
2. Подполковника Иван Иванович **Лободина**.
3. Старши лейтенанта Даниил Игнатьевич **Шамурӑна**.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 ҫулти майӑн 5-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Ҫарӑн начальство составне орденсемпе наградӑласси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн ҫаксене наградӑлас:

ХӖРЛӖ ЯЛАВ орденӗпе

1. Полковника Яков Петрович **Безверхова**
2. Батальоннӑй комиссара Давид Исаевич **Бессера**
3. Полковой комиссара Евгений Васильевич **Боброва**
4. Генерал-майора Никанор Дмитриевич **Захватаева**
5. Полковника Василий Михайлович **Ротова**.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 ҫулти майӑн 5-мӗш.

Хӗрлӗ Ҫарӑн начальство составне орденсемпе наградӑлани

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн наградӑланӑ:

ЛЕНИН орденӗпе — В. Г. Буйволов полковника,

П. А. Ротмистров полковника тата бригаднӑй комиссара **Н. В. Шаталова**.

ХӖРЛӖ ЯЛАВ орденӗпе — 84 ҫынна;

ХӖРЛӖ ҪӐЛТӐР орденӗпе — 22 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

* * *

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн наградӑланӑ:

ХӖРЛӖ ЯЛАВ орденӗпе — 20 ҫынна;

ХӖРЛӖ ҪӐЛТӐР орденӗпе — 14 ҫынна;

«ЗА ОТВАГУ» медальпе — 1 ҫынна наградӑланӑ (ТАСС).

В. М. Молотов юлташ Польша республикин ютҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ господин Э. Рачинский патне янӑ саламлӑ телеграмма

Майӑн 3-мӗшӗнче Польша республикин национальнӑй праздникӗ ячӗпе ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Польша республикин ютҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ господин Э. Рачинский патне ҫакӑн пек саламлӑ телеграмма янӑ:

«Польша республикин национальнӑй праздникӗ ячӗпе Совет Правительстви поляк халӑхне ҫӗнтерӳсем тума суннине, Польша ҫӗршывне нимӗҫ фашисчӗсенчен хӑтарса ҫӗнӗрен ирӗклӗ Польша тӑвассишӗн кӗрешнӗ ҫӗрте ҫӗнтерӳсем тума суннине йышӑнма ыйтать».

Господин Э. Рачинский В. М. Молотов патне янӑ телеграмма

В. М. Молотовӑн саламлӑ телеграммине ответлесе, господин Э. Рачинский ҫакӑн пек телеграмма янӑ:

«Польшӑн национальнӑй праздникӗ ячӗпе Эсир Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительстви ячӗпе янӑ ӑшӑ сӑмахсем мана питех те хавасланттарать. Хамӑрӑн тӑшманӑн пусмӑрӗнчен Польшӑна ирӗке тухма сунса каланӑ кӑмӑллӑ сӑмахсемшӗн Сире Польша правительстви хӗрӳллӗн тав туннине йышӑнма ыйтатӑп».

Шкулсенчи пӗлӳ тӗрӗслевӗсем

РСФСР шкулӗсенче пӗлӳ тӗрӗслевӗсем майӑн 21-мӗшӗнчен пуҫланса 31-мӗшӗччен пырӗҫҫӗ. 4, 5, 6 тата 7-мӗш классенче вӗренекенсен вырӑс чӗлхипе тата математикӑпа испытани тытмалла; 8-мӗшпе 9-мӗш классенче вӗренекенсем—литературӑпа тата математикӑпа, 10-мӗш класра вӗренекенсем—литературӑпа, математикӑпа, физикӑпа тата ютҫӗршыв чӗлхипе испытани тытаҫҫӗ. Вырӑс мар халӑхсен шкулӗсенче кусемсӗр пуҫне испытанисем тӑван чӗлхепе (4—7-мӗш классенче) тата тӑван литературӑпа (8—10-мӗш классенче) [illegible] пулать (ТАСС).

Ирӗке кӑларнӑ районсенчи всевобуч

Кондрово хулинчи (Смоленск облаҫӗ) совет граждӑнӗсем, фашистла чуралӑхран ирӗке тухнӑскерсем, винтовкӑна, ҫар уставӗсене тата тӑшмана хирӗҫ кӗрешмелли тактикӑна хаваслансах вӗренеҫҫӗ.

Всевобуч пункчӗсенче нумайӑшӗнче Хӗрлӗ Ҫар командирӗсемпе политработникӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем занятисене ӗҫе пӗлсе лайӑх ирттереҫҫӗ, всевобучра вӗренекенсен пӗлӳлӗхне ытларах ӳстерме тӑрӑшаҫҫӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

Майӑн 6-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Майӑн 6-мӗшӗнче фронтра нимӗнле пысӑк улшӑнусемех те пулман.

Тӗрӗсрех палӑртнӑ тӑрӑх, майӑн 4-мӗшӗнче нимӗҫсенне малтан пӗлтернӗ пек 12 самолет мар, 14 самолет пӗтернӗ.

Майӑн 5-мӗшӗнче нимӗҫсен 6 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 5 самолет пӗтнӗ.

* * *

Баренц тинӗсӗнче пирӗн карапсем противникӑн 5.000 тонна водоизмещениллӗ транспортне путарнӑ.

* * *

Майӑн 5-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем нимӗҫсен 2 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 65 автомашинине, зенитнӑй пулеметсен 8 точкине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, чугунҫул ҫинчи поезда ҫӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине 2 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Икӗ кун хушши вӑйлӑн ҫапӑҫса, Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1.000 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче совет кавалерисчӗсем противника халӑх пурӑнакан пӗр пунктран хӗссе кӑларнӑ. Нимӗҫсен 300 салтакӗпе офицерӗ вилнӗ. Пирӗн боецсем нимӗҫсен танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 8 станковӑй, 7 ручной тата шултӑра калибрлӑ 3 пулемет, 6 миномет, пӗр автоматла тупӑ, 105 винтовка тата 10.000 патрон. Нимӗҫсен темиҫе вуншар салтакне тыткӑна илнӗ.

* * *

Ленинград фрончӗн уйрӑм участокӗсенче кӗрешекен пирӗн чаҫсем тӑшманӑн 500 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Суворов юлташӑн подразделенийӗнчи пулеметчиксем нимӗҫсен «Мессершмитт-109» йышши истребительне персе ӳкернӗ.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче противник пирӗн малти подразделенисене атакӑлама хӑтланнӑ. Анчах та артиллерирен тата пехотӑн хӗҫпӑшалӗсенчен персе, ӑна хӑй малтан йышӑнса тӑнӑ позицисем ҫине каялла сирсе янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче противникӑн виллисем нумай выртса юлнӑ.

* * *

Противникӑн оборона рубежне атакӑланӑ вӑхӑтра красноармеец Чумаков тӑшманӑн дзотне ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Штыкпа тата гранатӑпа тӑрса ҫапӑҫса, хӑюллӑ боец 10 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Унтан, тӑшманран тытса илнӗ гранатӑсемпе хӗҫпӑшалланса, Чумаков юлташ нимӗҫсен автоматчикӗсем кӗрсе ларнӑ ҫурт патне шуса пынӑ та вӗсем ҫине гранатӑсем ывӑтнӑ.

* * *

Смоленск облаҫӗн районӗсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен «Ф. Д.» ятлӑ отрячӗ нимӗҫсен артиллери полкӗн штабне аркатса тӑкнӑ. Партизансем 2 оруди пӗтерсе тӑкнӑ, телеграфпа телефон станцине ҫӗмӗрнӗ тата боеприпассен складне ҫунтарса янӑ. Совет патриочӗсем 70 гитлеровеца вӗлернӗ тата 3 пулемет, миномет, винтовкӑсем тата тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗпе документсем тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫсен 88-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 248-мӗш полкӑн 3-мӗш батальонӗнчи 9-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ обер-ефрейтор Иоганн Гиммельбауэр ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн дивизи Францире тӑнӑ. Дивизие Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронта илсе каясси ҫинчен хыпар сарӑлсан, пӗр ушкӑн салтак Испание тарнӑ. Фронта пирӗн батальон март уйӑхӗнче ҫитрӗ. Икӗ эрне хушши ҫапӑҫса, эпир батальонри ҫынсен ҫуррине ҫухатрӑмӑр. Пиртен инҫех мар вырӑна Франке капитан командир пулса тӑракан батальон хӳтӗлесе тӑнӑ. Ҫав батальонӑн кашни ротинче ҫын ахаль чухнехи взводринчен те сахалтарах тӑрса юлнӑ. Нумай салтаксем ҫӗтӗлсе пӗтнӗ, тӳрлетме те юраман атӑсемпе ҫӳреҫҫӗ. Продовольстви тӗлӗшпе те ӗҫ начар тӑрать. Халӑхран урӑх нимӗн илмелли те ҫук ӗнтӗ. Хресченсене тахҫанах ҫаратса пӗтернӗ. Нумай чаҫсем пӗртте ҫапӑҫма пултараймаскерсем. Салтаксем вӑрҫӑ пӗтессине тата киле таврӑнассине кӗтеҫҫӗ».

* * *

Нимӗҫ оккупанчӗсем хаяррӑн асаплантараҫҫӗ пулин те, Бельги патриочӗсем хӑйсене чуралантаракансене хирӗҫ кӗрешессине вӑйлатса пыраҫҫӗ. Нумаях пулмасть Брюссель патӗнчи (Бельгия) ҫар завочӗ, нимӗҫсен паллӑ Крупп фирмин завочӗ пулса тӑраканскер, трансформатор станцийӗ пӑсӑлнӑ пирки ӗҫлеме пӑрахнӑ. Антверпенра юлашки вӑхӑтра такамсем портри темиҫе крана стройран кӑларнӑ тата диверсиллӗ ӗҫсем тунӑ, ҫак ӗҫсене пула шлюзсемпе каналсем хытӑ ҫӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Германин информаци бюровӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Геббельс Берлинра пурӑнакан халӑха пӗр-перинпе йӗркеллӗ пулса пӗр-пӗрне кӳрентермесӗр калаҫакансен конкурсне хутшӑнма чӗннӗ. «Конкурс умне ҫакӑн пек задача лартнӑ: Берлинри халӑхран вӑрҫӑ йывӑрлӑхӗсене пӑхмасӑрах пӗр-перинпе ялан йӗркеллӗ пулса пӗр-пӗрне кӳрентермесӗр калаҫакан, хӑйсене хӑйсем йӗркеллӗ тытакан 40 ҫынна суйласа илмелле».

Лайӑх пурнӑҫран мар ӗнтӗ фашистла ҫаратуҫӑсен ҫавӑн пек конкурс тума тивет. Вырӑсла, ӗҫӗн каторгӑлла условийӗсем, ҫавӑн пекех тата нимӗҫ ҫарӗсем Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтра питӗ те пысӑк ҫухатусем тӳсни — ҫаксем нимӗҫсене йӑлтах йӗркерен кӑларнӑ. Конкурс тума шутланӑ пулсан, гитлеровецсене темиҫе миллион ҫын пурӑнакан Берлинра та ялан йӗркеллӗ пулса пӗр-пӗрне кӳрентермесӗр калаҫакан, «хӑйсене хӑйсем йӗркеллӗ тытакан» темиҫе вуншар ҫын тупма та йывӑр курӑнать.

Майӑн 7-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Майӑн 7-мӗш ҫӗрле тӗнӗ чух ҫӗрле фронтра нимӗнле паллӑ улшӑнусемех те пулман.

* * *

Тимофеев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн часть, Калинин фронтӗнче кӗрешекенскер, пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсенне пӗр танк, 3 оруди, 16 пулемет тата 2 миномет пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 300 ҫын ытла вилсе пӗтнӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн танковӑй часть апрель уйӑхӗнче нимӗҫсен 7 самолетне, 5 танкне, 34 орудине, шултӑра калибрлӑ 7 пулеметне, 23 минометне, пӗр вездеходне тата зенитнӑй установкине пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех танкистсем 29 блиндажа ҫӗмӗрнӗ, 48 огневой точкӑна пӗтерсе тӑкнӑ тата гитлеровецсене 600 ҫынран кая мар вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Взвод командирӗ Токарев ертсе пыракан 8 красноармеец гитлеровецсен 80 ҫынран тӑракан отрядне тӗл пулнӑ. Боецсем нимӗҫсем патне систермесӗр шӑвӑнса пынӑ та вӗсем ҫине пулеметсенчен пеме тытӑннӑ. Нимӗҫсен 25 салтакне вӗлернӗ. Ыттисем нимӗн йӗркисӗр каялла чакнӑ.

* * *

Нимӗҫсен темиҫе салтакӗ красноармеец-разведчика Селезнёв юлташа ҫавӑрса илнӗ те ӑна тыткӑна илме шутланӑ. Хӑюллӑ боец, хӑйӗн автоматӗнчен персе, икӗ нимӗҫе пӗтерсе тӑкнӑ та хӑйӗн чаҫне нимӗҫсен ручной пулеметне илсе таврӑннӑ.

* * *

Партизансен В. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ, Орел облаҫӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, нимӗҫсен 3 грузовой автомашинине, боеприпассем тиенӗ 2 лавне пӗтерсе тӑкнӑ, чугунҫул кӗперне сирпӗнтерсе янӑ тата тӑшманӑн продовольстви тиенӗ обозне тытса илнӗ. Партизансем, тӑшманпа тытӑҫса ҫапӑҫнӑ чухне, нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене 170 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Нимӗҫсен 252-мӗш дивизийӗн 473-мӗш полкӗнчи 1-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Эрвин Доннковский ҫапла каласа панӑ: «Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнче эпӗ вӑрҫӑ пуҫланнӑрантпах пулнӑ. Эпӗ нумай курса тӳссе ирттернӗ. Германи ҫарӗ ҫынсемпе хӗҫпӑшал тӗлӗшӗнчен ҫавтери пысӑк ҫухатусем тӳснине пӗлетӗп. Ҫав ҫухатусенчен чи пысӑкки вӑл—салтаксен ҫапӑҫас кӑмӑлӗ пӗтни пулса тӑрать. Малтанхи салтаксем пит сахал тӑрса юлчӗҫ. Пирӗн ротӑра вӗсем пӗтӗмпе те темиҫе ҫын кӑна. Вӗсен халӗ шухӑш-кӑмӑлӗсем пӗлтерхинчен пачах урӑхла. Вилнисемпе аманнисем вырӑнне резервистсене яраҫҫӗ. Вӗсем питех те начар вӗренсе хатӗрленнӗ тата вӑрҫасшӑн та мар. Вырӑссем нимӗҫ халӑхне хирӗҫ мар, Гитлерпа унӑн ҫывӑх ҫыннисене хирӗҫ вӑрҫнине салтаксем нумайӑшӗсем ӑнланма пуҫларӗҫ».

* * *

Нимӗҫсен 294-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 513-мӗш полкӗнчи батальоннӑй врач Гайнц Вернер нумаях пулмасть Германие хӑйӗн пӗлӗшӗ патне ҫапла ҫырнӑ: «Эпир приемнӑй пункт сарайра турӑмӑр. Кунта чирлӗ салтаксем тӑтӑшах 50-шар ҫынна ҫити вырттаҫҫӗ. Вӗсем хушшинче симулянтсем нумай. Кашни симулянт госпитальре мӗнле те пулин ытларах выртасшӑн. Эпӗ вӗсемпе нимӗн те тума пултараймастӑп».

* * *

Краматорская заводӗнчи рабочи Е. Л. Татаренко, нимӗҫсем йышӑннӑ территори ҫинчен пирӗн войскӑсем вырнаҫса тӑнӑ ҫӗре тырса ҫитнӗскер, ҫапла пӗлтерет: «Краматорская хулинче тискер ӗҫсем пулса иртеҫҫӗ. Фашистла ирсӗрсем мирлӗ халӑха куллен-кун асаплантараҫҫӗ, нимӗн айӑпсӑр ҫынсене ҫӗршерӗн пере-пере вӗлереҫҫӗ. Ҫапла, сӑмахран, нимӗҫсем Меловая тӑвӗ патӗнче совет служащийӗсене 250 ҫынна персе пӑрахнӑ. Халӑха ҫаратса пӗтернӗ, вӑл выҫӑ ларать, магазинсене хупнӑ. Пасарсенче нимӗн те ҫук. Хресченсем нимӗнле продуктсем те илсе килмеҫҫӗ, мӗншӗн тесен нимӗҫсем йӑлтах туртса илеҫҫӗ. Гитлеровецсем хулара пурӑнакан ҫынсене нимӗҫсен ҫарӗшӗн пӗр тӳлемесӗр ӗҫлеттереҫҫӗ. Ҫав приказа пурнӑҫа кӗртменшӗн ҫынсене штрафлаҫҫӗ, арестлеҫҫӗ. Фашистла палачсем совет граждӑнӗсене хӗнесе асаплантармалли—шомполсемпе 25-шер хут е ытларах та ҫапмалли йӗрке туса хунӑ».

Сталин юлташӑн приказне большевикла пурнӑҫа кӗртсе пырар

Ҫӗнтерӳ тума чӗнекен приказпа хавхаланса

Пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен аслӑ уявӗ—Майӑн 1-мӗшӗ кӑҫал ӗҫпе кӗрешӳ кунӗ пулса тӑчӗ. Вӑл кунах Калинино районӗнчи ӗҫҫыннисем суракине масӑллӑн тухнипе паллӑ турӗҫ. Вӑл кун пӗтӗм Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем Оборона Халӑх Комиссарӗн, халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗн Сталин юлташӑн ҫӗнтерӳ тума чӗнекен приказне итлерӗҫ. «1942 ҫула нимӗҫсен фашистла войскисене пӗтӗмпех аркатса тӑкмалли тата совет ҫӗрне гитлерла мерзавецсенчен ирӗке кӑлармалли ҫулталӑк туса хумалла»,—тет Сталин юлташ. Унӑн сӑмахӗсем районри ӗҫҫыннисене, колхозниксемпе колхозницӑсене суракине чи кӗске срокра тата пысӑк пахалӑхпа ирттерме хавхалантарчӗҫ.

Районри колхозсем Майӑн 1-мӗшӗнче суракине тухса малтанхи кунсенчех паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Мичурин ячӗпе тӑракан колхозра суха тӑвакан И. Андреев колхозник кунне 1,2 гектар сухалас вырӑнне 1,4 гектар сухаларӗ. Сӳрелекен С. Тимофеев колхозник нормӑран ирттерсе 2 гектар сӳрелерӗ. «Коминтерн» колхозра Г. Белов, Калинин ячӗпе тӑракан колхозра З. Короткова сухаҫсем ударлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Майӑн 6-мӗшӗ тӗлне районри колхозсем пурӗ 4.641 гектар сухаланӑ, 4.079 гектар ҫине пӗрчӗллӗ тырӑсем акнӑ. «Красноармеец», «Социализм», Пушкин ячӗпе тӑракан колхозсем пӗрчӗллӗ тырӑсене акса пӗтерчӗҫ. Сураки планне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн «Социализм» колхоз оборона фондне хума, нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи колхозсене пулӑшма 2 гектар, «Чӑваш Коммуни» колхоз 6 гектар тырӑ акса хӑварчӗҫ.

Колхозниксен ӗҫлес кӑмӑлӗ пысӑк. Сталин юлташӑн приказне ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн ӗҫри хастарлӑх татах та вӑйланчӗ. Папанин ячӗпе тӑракан колхозра Д. Чиркова колхозница куллен ки ӗҫ нормине 120 процентран кая мар тултарса ӗҫлет. «Партизан» колхозра Иванова, Егорова колхозницӑсем ӗҫе ир-ирех тухса мӗн тӗттӗм пуличчен ӗҫлеҫҫӗ. Талӑкри ӗҫ нормине 130—140 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

П. СЕРГЕЕВ.

ПРОИЗВОДСТВӐЛЛӐ ҪӖНӖ ҪӖКЛЕНӲ

КАНАШ, майӑн 7-мӗш. **(Телефонпа).** Оборона Халӑх Комиссарӗн Сталин юлташӑн приказӗ вагонсем юсакан заводра производствӑллӑ ҫӗнӗ ҫӗкленӳ пуҫарчӗ. Рабочисемпе работницӑсем, техниксемпе инженерсем Сталин юлташӑн приказӗ ҫине ответлесе, тата лайӑхрах, тата тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пулаҫҫӗ. Вагонсем юсакан цехри Каванов, Жук юлташсен бригадисем, апрель уйӑхӗнчи ӗҫ планне чылай ирттерсе тултарнӑскерсем, ҫак уйӑхра нормӑна пӑхнинчен 2 хут тухӑҫлӑрах ӗҫлеме обязательство илнӗ. Халӗ вӗсем куллехи заданисене кашни кун 200—250-шар процент тултарса пыраҫҫӗ. Капелюк, Михайлов, Фоменко юлташсен бригадисем те сменӑри нормӑна пӗрмаях 2—3 хут ирттерсе тултараҫҫӗ, талӑкри графикпа палӑртнӑ ӗҫе туса пӗтермесӗр нихҫан та ӗҫрен тухмаҫҫӗ.

Вагонсем юсакан цех коллективӗ—заводра малта пыракан коллектив. Сталин юлташӑн приказне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн вӑл май уйӑхӗнче 2 хут тухӑҫлӑрах ӗҫлеме, 25 рационализаторла сӗнӳсем пама обязательство илнӗ.

ВЦСПС предприятисенчи рабочисене апат-ҫимӗҫсемпе таварсем парса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлекен отделсене профсоюз организацийӗсем енчен пулӑшасси ҫинчен

Правительство йышӑннӑ тӑрӑх, промышленноҫӑн ертсе пыракан отраслӗсенчи предприятисенче рабочисене апат-ҫимӗҫсем, таварсем парса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлекен отделсем (ОРС-сем) тӑваҫҫӗ. Вӗсен задачи—ҫавӑн пек предприятисенчи рабочисене, инженерсемпе техниксене, служащисене тата вӗсен ҫемьисен членӗсене магазинсем, лавкасем, ларексем, столовӑйсем, буфетсем урлӑ апат-ҫимӗҫсемпе таварсем парса тӑрас ӗҫе организацилесси пулса тӑрать.

Правительствӑн рабочисемпе служащисене апат-ҫимӗҫсемпе таварсем парса тӑрас ӗҫе лайӑхлатмалли тата апат-ҫимӗҫ базине вӑйлатмалли ҫак решенине питех те пысӑк вырӑна хурса, ВЦСПС рабочисене апат-ҫимӗҫсемпе таварсем парса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлекен отделсем организациленӗ производствӑллӑ предприятисенчи профсоюзсен центральнӑй комитечӗсене Наркоматсен рабочисене апат-ҫимӗҫсемпе таварсем парса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлекен главнӑй управленийӗсем мӗнле ӗҫленине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑма тата вӗсене куллен пулӑшу парса пыма хушнӑ. Ҫавна май профсоюзсен центральнӑй комитечӗсем ҫумӗнче рабочисене апат-ҫимӗҫсемпе таварсем парса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлекен отделсем тӑваҫҫӗ. Профсоюз организацийӗсен совхозсемпе ОРС-сен подсобнӑй хуҫалӑхӗсем ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсем лартса хӑварма хатӗрленсе ҫитнипе ҫитменнине тӗрӗслеме тата 1942 ҫулӑн иккӗмӗш кварталӗнче рабочисемпе служащисем валли централизованнӑй йӗркепе уйӑрса панӑ апат-ҫимӗҫ фончӗсене предприятисенче мӗнле вырнаҫтарнине пӑхса тухмалла.

Фабзавкомсене рабочисене апат-ҫимӗҫсемпе таварсем парса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссисем тума тата вӗсене ОРС-сен ӗҫне хутшӑнтарма хушнӑ. Суту-илӳ, столовӑй тата буфетсен ӗҫӗсене тӗрӗслес тӗлӗшпе ҫак комиссисем профсоюз активӗнчен лавкасенче, столовӑйсенче тата ытти ҫӗрте рабочисен комиссийӗсене организацилеҫҫӗ. Вӗсем, ОРС-сем урлӑ апат-ҫимӗҫсемпе таварсем илсе тӑракан рабочисемпе служащисен, вӗсен ҫемьисен членӗсен контингентне тӗрӗссипе тӗрӗс маррине, апат-ҫимӗҫ карточкисемпе продуктсем илмелли кӗнекесем т. ыт. те тӗрӗссипе тӗрӗс маррине тӗрӗслеҫҫӗ.

Центрсенчи, облаҫсенчи тата фабрикӑсемпе заводсенчи комитетсен ОРС предприятийӗсенчи рабочисемпе служащисене апат-ҫимӗҫсемпе таварсем парса тӑрас ӗҫе лайӑх организацилес тӗлӗшпе социализмлӑ ӑмӑртӑва аваҫтармалла, лайӑх магазинсемпе столовӑйсен ӗҫӗсемпе ыттисене анлӑн паллаштармалла.

Рабочисемпе служащисене апатланмалли продуктсем кирлӗ таранах парса тӑрас ӗҫе профсоюзсен пысӑк ӗҫӗсенчен пӗри вырӑнне хурса, ВЦСПС мӗнпур профсоюз организацийӗсене ОРС-сен ӗҫне кампаниллӗ мар, куллен туса пыма тата вӗсене практикӑллӑ пулӑшу парса тӑма хушать. (ТАСС).

— ⊙ —

Хуҫалӑхра кулленхи кирлӗ япаласене вырӑнтах тӑваҫҫӗ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Заря» артель вырӑнти чӗртавартан хуҫалӑхра куллен кирлӗ япаласем туса кӑларас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлеме пуҫларӗ. Вӑрманӑн варне парник туса лартнӑ. Хӗллехи вӑхӑтра парникре ҫуна тупанӗсем авса 79 ҫуна туса сутнӑ. Ку ӗҫпе ӗҫлеме мастер тупса, 5 ҫынна ҫав ӗҫе вӗрентнӗ. Унтах каткапичкесем те тӑваҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра артельре кашӑк-ҫапала тӑвакан мастерской уҫнӑ. Унта 2 ҫын ӗҫлет. Икӗ уйӑх хушшинче 3.000 кашӑк тунӑ. Е. Скворцова юлташ кунне 50 кашӑк вырӑнне 100 кашӑк тӑвать. Артель ҫулла валли урапасем тума палӑртнӑ. Тукӑнсем авма тытӑннӑ та ӗнтӗ.

Нумай пулмасть тикӗт-сӑмала савӑтне ӗҫе янӑ. Ҫулла валли тикӗт питӗ кирлӗ. Таврара тикӗтпе сӑмала юхтаракан завод ниҫта та ҫук. Артель пӗр тонна тикӗтпе сӑмала туса кӑларнӑ та ӗнтӗ. Тикӗтпе сӑмала тунӑ ҫӗрте 65 ҫулти старик Ф. Никифоров тата унӑн хӗрӗсем Акулина, Раиса, Фекла тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Никифоров ҫемьи кӑмрӑк тӑвас ӗҫпе те ӗҫлет.

Ку енчи ҫынсем нихҫан та чӑпта ҫапас ӗҫпе ӗҫлемен. Кӑҫал кӳршӗсенчен чӑпта ҫапас ӗҫе пуҫарса янӑ. Колхозри 9 хӗрарӑма чӑпта ҫапма вӗрентнӗ. Кӗске вӑхӑт хушшинчех 2.500 чӑпта ҫапнӑ. М. Васильева звени кунне 12 чӑпта вырӑнне 20 чӑпта, П. Васильев звени 18 чӑпта ҫапнӑ. Ҫавӑнпа пӗрлех кунта промышленноҫра усӑ курмалли вӗренсем яваҫҫӗ.

Артель кӑҫал колхозсем валли 2.000 пӑяв, ҫулӑк, кӗреплесем, кӗреҫесем тунӑ. Ҫулла хуралтсем ҫине витмелли турпассем тума пуҫлаҫҫӗ.

В. ВИКТОРОВ.

Тырпулсене хăвăрт тата лайăх пахалăхпа акса хăварар

Çуракине ăнăçлăн ирттерни фронтра çĕнтерÿ тунипе пĕрех

— Тăпра нÿрĕрех те, çапах типсе çитессе кĕтме халăмăрсем çук: кăçал çураки ĕçĕсем ахаль те каярах тăрса юлчĕç,—тет Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Н. Думилин.

Пĕтĕм çĕр лаптăкĕ типсе çитессине кĕтмесĕрех, колхоз суйласа илнĕ участоксем çинче икĕ кун хушшинче 30 гектар ытла акнă. Çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли кирлĕ чухлĕ тырпул, ялхуçалăх продукчĕсем туса парас тесе колхозниксемпе колхозницăсем çуракин малтанхи кунĕсенчех ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Уйрăмах çуракинче малта пыракан пĕрремĕш бригадăри колхозниксем (бригадирĕ А. Крылов) лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. В. Самакин колхозник майăн 6-мĕшĕнче алăпа 9 гектар акнă. Çапла вăл икĕ кун хушшинче 8,64 ĕçкунĕ тунă. А. Учасева, Ф. Думилина, П. Исаева тата Ф. Ермолаева сухаçăсем те ĕç нормине ирттерсе тултарнă.

Кунта суха тăваканcене уйрăм участоксем çирĕплетсе панă; çапла туни кашни колхозник-сухаçă мĕнле пахалăхпа тата хăвăртлăхпа ĕçленине тĕрĕслеме май парать.

— Акă, пăхăр, ку ĕçе тÿрĕ кăмăлпа тăрăшса туман теме май çук,—тет Крылов юлташ, пире кашни сухаçăн участокĕпе паллаштарса. Чăнах та ку участоксене пĕр ширлăк хăвармасăр тикĕс сухаланă.

Ĕçе тĕрĕс хаклани бригадăн сухаçисене малашне татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать. Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕнче панă приказа вуланă хыççăн колхозниксем ир пулакан пĕрчĕллĕ культурăсене 7 талăк хушшинче акса пĕтерме обязательство илнĕ. Ăна вĕсем чыслăн пурнăçлаççĕ.

Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне çуракине кĕске срокра ирттерес ĕçе параççĕ. Колхоз правленийĕн членĕ Леонид Исаевах илер. Çуракине тÿрремĕнех хутшăнма унăн сывлăхĕ çук. Анчах вăл ĕççĕр лармасть. Исаев юлташ кăçал çураки ĕçĕсене малтанхи хут хутшăнакан колхозницăсене ĕçе вĕрентме уя тухнă. Кирлĕ те пархатарлă ĕç. Иккĕмĕш бригадăра ĕçлекен Клавдия тата Анисия Васюткинăсем халиччен алăпа тырă акма пĕлмен. Исаев юлташ вĕсене ку ĕçе вĕрентрĕ. Ĕçе юратакан Васюткинăсем халĕ хăйсем тĕллĕнех тырă акаççĕ. Майăн 6-мĕшĕнче вĕсем 3 гектар акса ĕç нормине ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Тухăçлă тырпулăн никĕсне хывакансем—çуракинче тÿрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташăн приказне пурнăçласшăн ĕçлеççĕ. Вăйлă тырпул туса илес ĕç вăрçă фрончĕсенче тăшмана çĕнтерсе пырас ĕçпе танлашнине колхозниксем лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем хăйсен пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне çуракине ăнăçлăн ирттернĕ çĕре хураççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

ЧКАЛОВСКОЕ (**хамăр корр.**).

Трактористсем-стахановецсем

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 4-мĕш. (**Хамăр корр.**). Машинно-тракторнăй станцин трактор бригадисем апрель уйăхĕн юлашки кунĕсенче ĕç вырăнĕсене тухса вырнаçнă. Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнса, çуракин малтанхи кунĕсенчех трактористсем ĕçе пысăк хавхаланупа тума тытăнчĕç. Майăн 1—2-мĕш кунĕсенче нумай трактористсем Сталинла вахтăна тăрса хĕрÿллĕн ĕçлерĕç.

Майăн 1-мĕшĕнче ирпе ирех ĕçе тухса иккĕмĕш бригадăри трактористсем: Курочкин — 9 гектар, Чалбаева — 7,15 гектар, Уфимкина — 7,58 гектар сухаларĕç. Сменăри норма — 5,4 гектар. Çавăн пекех ытти бригадăсенче те трактористсем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. 5-мĕш бригадăри трактористсен Е. Иванов, М. Егельков юлташсен Майăн 1-мĕшĕнче газогенераторнăй тракторсемпе сменăра 5,4-шер гектар сухаламалла пулнă пулсан, вĕсем 12-шер гектар сухаларĕç.

Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозăн хирĕсенче ĕçлекен Данилов юлташăн бригади уйрăмах лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Тракторист Семенов юлташ майăн 1—2-мĕш кунĕсенче 22 гектар сухаларĕ. Турханти «Комбайн» колхозра ĕçлекен Оборин тракторист майăн 1—2-мĕшĕсенче 24 гектар, Ерасеев тракторист, 28 гектар сухаларĕç. Майăн 1-мĕшĕнче ĕçе тухса Федотов тракторист газогенераторнăй тракторпа 18 гектар, майăн 2-мĕшĕнче — 17 гектар сухаланă. Пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен трактористсем хăйсен пĕтĕм вăйне кăçалхи çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерсе, пысăк тырпул туса илес ĕçе хураççĕ. Вĕсен хĕрÿллĕ ĕçĕ ытти районсенчи трактористсемшĕн примерлă пулса тăрать.

Кок-сагыз акрĕç

ЧКАЛОВСКОЕ, майăн 5-мĕш. (**Хамăр корр., телефонпа**). Майăн 4-мĕш тĕлне «Хĕрлĕ паттăр», «Кзыл-Иолдыш», «Осоавиахим» тата Молотов ячĕпе хисепленекен колхозсем 2—3-шер гектар кок-сагыз акрĕç.

Çĕрулми вăрлăхне яровизацилеççĕ

ИШЛЕЙ. Мамăшри «Коммунист» колхоз 50 центнер, Кипечкассинчи «Красный танк» — 30 центнер, Тăрăн ялсоветĕнчи Водопьянов ячĕпе тăракан, «Большевик» тата ытти колхозсем те çĕрулми вăрлăхне яровизацилеме хунă.

З. МИТРОФАНОВА.

ÇАМРĂК ВЫЛЬĂХСЕНЕ КОНТРАКТАЦИЛЕС ĔÇ НАЧАР ПЫРАТЬ

СĔНТĔР. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн хисепне ÿстерес тата кашни колхозника ĕнеллĕ тăвас тĕлĕшпе кăçал Сĕнтĕр районĕнчи колхозсен план тăрăх 800 çамрăк пăру, 1.000 путек, 150 çăвăр сысна контрактацилесе хăвармалла. Анчах апрелĕн вĕçĕ тĕлне районри колхозсем мĕнпурĕ те 153 пăру, 85 путек çеç контрактациленĕ. Сысна çурисене контрактацилесе хăварас плана çеç район ăнăçлăн пурнăçланă—апрелĕн вĕçĕ тĕлне пурĕ 166 сысна çури контрактациленĕ.

Чылай колхозсем çамрăк выльăхсене контрактацилесе хăварас ĕçе тимлĕн туса пыраççĕ. «Коммунар» колхоз 9 пăру вырăнне 12 пăру контрактациленĕ. Юваново ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз планран ирттерсе 3 сысна çури контрактациленĕ. Çавăн пекех Пушкăрт ялсоветĕнчи «13 лет РККА», Купас ялсоветĕнчи «Заря» колхозсем çамрăк выльăхсене контрактацилес тĕлĕшпе 1942 çулти плана ăнăçлăн пурнăçланă.

Анчах чылай колхозсенче çак ĕç çине тивĕçлипе пăхмаççĕ-ха. Районри çĕрĕç отделĕн участоксенчи зоотехникĕсем те çамрăк выльăхсене контрактацилемелли плана тултарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Г. АКИМОВ.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ. План тăрăх районри колхозсен кăçал пурĕ 900 пăру контрактацилесе хăвармалла. Халĕ 445 пăру çеç контрактациленĕ. Чылай колхозсем çамрăк выльăхсене контрактацилес плана ăнăçлăн пурнăçларĕç. «Правда», «Кзыл Тан», «Ырлăх» колхозсем контрактаци планне ытлашшипех пурнăçланă.

Анчах та хăшпĕр колхозсенче фермăсем халĕ те пĕчĕккĕ. Çапла пулсан та, вăл колхозсен руководителĕсем çамрăк выльăхсене контрактацилес ĕçе япăх туса пыраççĕ. Тĕслĕхрен, «Ударник» колхозăн план тăрăх 45 пăру контрактацилемелле, 5 пăру çеç контрактациленĕ, «Путь Ленина» колхозăн 50 пăру контрактацилемелле пулсан, халĕ 7 пăру çеç контрактациленĕ. Çавăн пекех «РОКК» тата ытти хăшпĕр колхозсенче те çамрăк выльăхсене контрактацилес ĕç япăх пулса пырать.

Çамрăк выльăхсене лайăх пăхнă çĕрте

ЧКАЛОВСКОЕ. (**Хамăр корр.**). «Правда» колхозăн фермисенче ку таранa çитсе 12 пăру, 52 путек хутшăнчĕ. Фермăсенче ĕçлекенсем кашни çамрăк выльăха лайăх пăхса ÿстереççĕ.

Чкалов ячĕпе тăракан колхоз фермисенче 11 пăру, 41 путек хутшăннă. Вĕсем пурте хăвăрт ÿсcе пыраççĕ. «Нариман» колхозăн сурăх фермине кашни 100 сурăхран 122 путек илнĕ. Путексем пурте аван ÿсеççĕ.

Кĕсресене пĕтĕлентереççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Пролетарий» колхозра кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пункт уçнă. Пункт çак кунсенче ĕçлеме пуçларĕ. Унта 12 кĕсрене пĕтĕлентернĕ те ĕнтĕ. Пунктра кăçал 135 кĕсрене пĕтĕлентерме колхозсемпе договор тунă.

Районри ытти колхозсенче те чуптару ĕçĕ пуçланнă. Паян кунa пурĕ 54 кĕсрене чуптарнă. Шмидт ячĕпе тăракан колхозра 12 кĕсрене, «Двигатель революции» колхозра 5, «Культура» колхозра 4 кĕсрене чуптарнă.

В. В.

„Пионер Чувашии" танк тума

ШУПАШКАР. Етĕрнери çамрăк патриотсем чĕнсе каланин çине ответлесе, 9 мĕш номерлĕ туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем «Пионер Чувашии» танк тума 816 тенкĕ укçа пухрĕç. Вăл шутран 4-мĕш «А» класра вĕренекенсем Торжкова 40 тенкĕ, Головко 21 тенкĕ парĕç.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Майăн 2-мĕшпе 6-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Япони войскисем Бирмăра малалла куçса пыраççĕ. Лашио районĕнче японецсем Бирмăпа Китай хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх тапăнса пыраççĕ, Китай чикки патне çитнĕ те ĕнтĕ. Китай войскисем японецсене хирĕç вăйлăн тăраççĕ, вĕсене пысăк çухатусем кÿреççĕ.

Америка авиацин çапăçăва ирĕклĕн кĕрекенсен группин летчикĕсем юлашки кунсенче Рангун çине темиçе хут та вĕçсе пырса тапăннă. Кăнтăр Бирмăра çыран хĕрринчи сооруженисем çине бомбăсем пăрахнă. Ишĕлтернисем пулнă, пушарсем тухнă.

Филиппин утравĕсем çинче японецсем Манила заливне кĕнĕ çĕрте вырăнаçнă Коррегидор утравне татăклăн атакăлама тытăннă. Майăн 1-мĕшĕнче Япони авиацийĕ çав утрав çине 13 хутчен вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă. Çав вăхăтрах японецсем утрав çине йывăр орудисенчен персе тăнă. Майăн 4-мĕшĕнче артиллерирен 5 сехет хушши пĕр чарăнмасăр пенĕ. Унпа пĕрлех японецсем утрав çине тухса ăна çавăрса илме хăтланаççĕ.

Филиппинăн ытти утравĕсем çинче те, уйрăмăнах Минданао утравĕ çинче, çапăçусем пыраççĕ.

Австралин çурçĕр çыранĕн районĕнче, Çĕнĕ Британипе Çĕнĕ Гвинея утравĕсем çинче сывлăшри çапăçусем вăйланнипе пĕрлех, Çĕнĕ Гвинея çинче çĕр çинчи çапăçусем пуçланса кайнă. Мартхэм шывĕн тăрăхĕнче (Çĕнĕ Гвинейăн çурçĕр çыранĕ) çĕнĕрен наступлени пуçланă, утрав варринелле 27 километр кĕнĕ. Вĕсем темиçе аэродром тата ылттăн кăларакан центрсене тытса илнĕ. (ТАСС).

Англи войскисем Мадагаскара оккупациленĕ пирки

ЖЕНЕВА, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лаваль Америка ĕçĕсен поверенннăйне, Тукана, Виши правительствин нотине панă. Ку нотăна Виши правительстви Англи войскисем Мадагаскар утравне оккупациленине хирĕç протестлесе çырнă. Англи войскисем Мадагаскара йышăннă пирки пулас ĕçсемшĕн «ответлăха Виши правительстви президент Рузвельт çине те хурать», тесе вĕçленĕ нотăна.

ЖЕНЕВА, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Петэнпа Дарлан Мадагаскарти çарсен тата тинĕспе сывлăшри çар вăйĕсен главнокомандующине утрава Англи войскисенчен оборонăлама приказ панă.

АНГЛИ ПАРЛАМЕНТНЕ ÇĔНĔ ДЕПУТАТСЕМ СУЙЛАНИ

ЛОНДОН, майăн 5-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче Англин икĕ суйлав округĕнче — Уоллеси тата Регбих округĕсенче Англи парламентне çĕнĕ депутатсем суйланă. Уоллеси округĕ тăрăх парламента независимăйсен кандидачĕ Рикс, Регбих округĕ тăрăх — независимăйсен кандидачĕ, государство служащийĕсен профсоюзĕн секретарĕ Браун суйланнă.

Браун «Дейли мэйл» хаçатра статья пичетлеттернĕ. Çав статьяра вăл: суйлавçăсем умĕнче тухса каланă чухне иккĕмĕш фронт пуçласа ярасси çинчен нумай каларăм, тет. Çав статьяра çапла çырнă: «Çак вăрçăра çĕнтерÿ тумалли услови вăл — Гитлера икĕ фронтра çапăçмалла тăвасси тата Гитлер хĕвел тухăçĕнче вырăссене хирĕç вăрçнă вăхăтра унăн çине хĕвеланăçĕнчен тапăнасси пулса тăнине» Англи халăхĕ пĕлет. «Эпĕ суйлавсенче çĕнтерес ĕçре хам иккĕмĕш фронтшăн тăни çинчен каласа пани чылай пулăшрĕ», тенĕ Браун.

Майăн 1-мĕш кунне Латинла Америкăра уявлани

НЬЮ-ЙОРК, майăн 5-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Майăн 1-мĕшĕнче Мексикăра пулнă демонстрацие 100 пин çын ытла хутшăннă. Демонстраци «Демократиллĕ çĕршывсем сывă пулччăр!» «Фашизма—вилĕм!» текен лозунгсемпе пулса иртнĕ. Демонстрацири хăшпĕр çынсем Америкăн тата Совет Союзĕн ялавĕсене çĕклесе пынă. Аргентинăра Майăн 1-мĕшне уявласси кăçал уйрăмах вăйлă пулнă. Буэнос-Айресра пулса иртнĕ массăллă митингра тухса калакан ораторсем Рио-де-Жанейрора пулса иртнĕ конференци тĕнĕл держависемпе сыхăну тыгма пăрахасси тата демократи хăрушсăрлăхне сыхласси çинчен кăларса тăратнă требованисемпе Аргентинăн килĕшмелле, тесе уйрăмах палăртнă.

Гаваннăра (Куба) президент çурчĕ умĕнче Майăн 1-мĕш ячĕпе пулса иртнĕ демонстрацие 100 пин çын ытла хутшăннă. Майăн 1-мĕшĕнчи выступленире Куба президенчĕ Батиста çапла каланă.

«Росси тата Англия çĕнтерни пире питех те интереслентерни çинчен каласа, эпĕ хамăр халăхăн шухăш-кăмăлне палăртатăп. Европăпа Америка çине тискер çĕлен тапăнчĕ, çавăнта ĕнтĕ пирĕн ăна хирĕç кĕрешес пулать».

Майăн 1-мĕшĕнче тухса каланă пĕтĕм çĕршыв тăрăх радиопа панă сăмахра Бразили президенчĕ Варгас Бразили рабочийĕсене çар хатĕрĕсем тăвакан производствăра ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕннĕ.

Панама президенчĕ Дела Гуардиа Майăн 1-мĕшĕнче радио тăрăх каланă хăйĕн сăмахĕнче: Панамăн кашни çынни Панама каналне никам çĕмĕрейми крепость туса хурассишĕн кĕрешесси çине Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем шанса тăма пултараççĕ, тенĕ.

Майăн 1-мĕш ячĕпе Лионра пысăк демонстраци пулса иртнĕ

ЛОНДОН, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 1-мĕшĕнче Лионра пысăк демонстраци пулса иртнĕ. Хулари аслă площадьре 50 пин çын таран «Марсельеза» юрласа тухнă. Демонстрантсем «Сывă пултăр де Голль!», «Лавале çакса вĕлермелле!» тесе кăшкăрнă.

Финсен фашистла хаçачĕ Хĕрлĕ Çарăн пултарулăхĕ çинчен тунма пултараймасть

СТОКГОЛЬМ, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Або хулинче тухса тăракан хаçат хăйĕн çар корреспонденчĕн статьине пичетлесе кăларнă. Корреспондент Хĕрлĕ Çарăн çапăçури пултарулăхĕ çÿлти вырăнта тăнине пытарма пултараймасть. «Вырăссен атака тактики пĕтĕмпех çĕнĕ майлă,—тесе çырать автор.—Артиллери персе тăрса атакăна хатĕрленнĕ вăхăтрах совет салтакĕсем малалла чупса епле те пулсан инçерех кайма тăрăшаççĕ. Пирĕн лини патне малтан чупса çитнисем, васкасах окопа чавса, хăйсен линине тума тытăнаççĕ. Хыçалтан ерипенех çĕнĕрен çĕнĕ вăйсем çитсе тăраççĕ. Вырăссем дисциплинăллă, вĕсен салтакĕсем вăрçă ĕçне лайăх вĕренсе çитнĕ тата техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене те пурне те пĕлеççĕ. Вырăс çынни урипе ăçта ярса пуснă, ăна çав вырăнтан куса кăлармa питех те хĕн. Вырăссем пит те лайăх хĕçпăшалланнă, тата вĕсен çавтери лайăх йышши автоматлă пăшал та пур»,—тет финн фашисчĕсен çар корреспонденчĕ.

Голландипе Бельгире гитлеризма хирĕçле движени вăйланать

СТОКГОЛЬМ, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Германин информаци бюровĕ Гаагăран официальнăй йĕркепе панă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Ку пĕлтерÿ тăрăх, Голландире Германие хирĕç нумай хутчен диверсиллĕ пысăк актсем тунă организацие тупнă. Çак организацире тăнă голландецсене—79 çынна асаплантарса вĕлернĕ.

СТОКГОЛЬМ, майăн 6-мĕш. (ТАСС). «Социал-демократен» хаçат Бельгире тата Голландире Германие хирĕçле движени вăйланнине кăтартакан çĕнĕ фактсем пĕлтерет. Брюссель çывăхĕнчи пĕр пысăк çар завочĕн администрацийĕ, заводри трансформатор станцине такам пăснă пирки, çак кунсенче производство ĕçĕсене чарса лартнă. Ку завод Крупп компанийĕ аллинче тăнă пулнă. Антверпен портĕнчи кран-сене пурне те пăсса хунă, шлюзсенче тата чугунçул çинче диверсиллĕ нумай актсем пулса иртнĕ. Голландире те çакăн пекех шлюзсемпе каналсене пăсакан диверсиллĕ ĕçсем нумайланнă.

Францире заложниксене персе вĕлерни

ЦЮРИХ, майăн 5-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 20-мĕшĕнче Лилль хулинче (Çурçĕр Франция) хула варринчи площадьре револьвертен персе нимĕçсен пĕр салтакне вĕлернĕ. Çавăншăн Германин командованийĕ 10 заложнике персе вĕлернĕ.

Францирен килекен çынсем çапла пĕлтереççĕ: Лилльре нимĕçсен салтакне вĕлернĕшĕн нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем темиçе çĕр çын арестленĕ ĕнтĕ.

Паха тĕслĕхсем

КАНАШ. Вăтакас Татмăшри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем граната ывăтас тĕлĕшпе ăмăрту туса ирттерчĕç. Ăмăртăва 103 ача (вăл шутран 25 хĕрача) хутшăнчĕ.

Уйрăмăнах гранатăна 7-мĕш класра вĕренекенсем Артемьев, Степанов, Чагаков юлташсем лайăх печĕç. Вĕсем пурте окопа ÿкерессипе 60 очко, гранатăсене çыхса ывăтассипе 40—60 очко, çунакан шĕвек тултарса пересcипе 40 — 60 очко илчĕç. Çавăн пекех 5—6-мĕш классенчи Н. Тихонов, Л. Никифоров, Ф. Федоров, М. Андреев, П. Тихонов, И. Ильин вĕренекенсем те ушкăнĕпе 160—180 очко илчĕç.

Хĕрачасем те граната пересcипе арçын ачасенчен юлманни курăнчĕ. А. Капитонова, Е. Михайлова, Е. Степанова, К. Егорова, А. Дмитриева, К. Иванова хĕрачасем 140—160-шар очко илчĕç.

Ăмăртура Йăлмаччари пуçламĕш шкулта вĕренекенсем те паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Кунти ачасем пурте пекех 120—160 очко илчĕç. Çĕнĕ Шуртанти, Анаткас Татмăшри пуçламĕш шкулсенче те ăмăрту лайăх результатсемпе иртрĕ. Ачасем граната ывăтассипе пысăк мастерлăх кăтартрĕç.

Т. ТУРХАН.

Телефонисткăсем хатĕрлеççĕ

ЕТĔРНЕ. Çак кунсенче Осоавиахимăн районри Совечĕ телефонисткăсем хатĕрлекен курссем 4 вырăнта уçрĕ. Районĕпе пурĕ 100 çын хатĕрлеççĕ. Занятисем виçĕ кунта пĕрре пулса иртеççĕ. Çамрăксем телефон ĕçне вĕренесшĕн тăрăшаççĕ. Уйкас ялсоветĕнчи Федорова, Петрухина хĕрачасем занятисене пĕр кун сиктермесĕр çÿреççĕ.

И. ТИМОНИН.

Фашистсен Крымри тискер ĕçĕсем

КРЫМ, майăн 6-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен тылĕнче кĕрешекен черноморецсен командирĕ ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ:

— Хамăр пынă çул çинче ăçта пынă унта гитлеровецсен тискер кайăкла ĕçĕсен, вĕсем ишĕлтерсе çĕмĕрсе пĕтернин йĕрĕсене куратпăр. Нимĕçсем хăйсем Крыма килнине мĕн курнă çавна пурне те çаратнипе, персе вĕлернисемпе, хĕрарăмсенчен тата хĕрсенчен мăшкăлланипе паллă тунă.

Халăхсене массăллăн персе вĕлернĕ хыççăн фашистсен Крымри войскин командующийĕ Гитлерăн палачĕ генерал Манштейн тинĕс хĕрринчи районсенчен мĕнпур вырăссене Симферополь тепĕр енчи пушă хире хăваласа яма приказ панă. Вырăс çыннисене çĕр чавмалли йывăр ĕçсенче ĕçлеттереççĕ.

Ялсене юлнă çынсене общинăсем туса пĕрлештернĕ. Вĕсем валли крепостнăй йĕрке туса хунă. Мĕнпур арçынсем, 15 сехет ĕçленĕ хыççăн, хăйсен çемьисенчен уйрăм çуртра пулмалла. Çав çуртра пыманнисене хаяррăн асаплантараççĕ. Пĕр хресчен старостăран ыйтмасăрах 2—3 сехетлĕхе кÿршĕри яла кайнă, унтан таврăнсан ăна комендатурăна илсе пынă та вĕлерес пек хĕненĕ.

Гитлеровецсем хресченсен мĕнпур тырпулне тытса илнĕ. Ĕçлеме пултаракансене кунне 200 грамм тыррăн параççĕ. Кам та пулин ĕçе пĕр минута çеç кая юлса тухать пулсан, ăна çак чун усрамалăх паракан паекa та икĕ эрне хушши памаççĕ.

Салтак ăçта та пулин пĕр татăк çăкăр курать пулсан, ăна вăл çийĕнчех туртса илет. Нумаях пулмасть, румын салтакĕсем пĕр пĕчĕк ача хура пашалу çинине курнă та ăна çавăнтах хĕнесе тăкнă.

Вырăнти халăх выçăпа асапланать. Тинĕс хĕрринче темĕн чухлĕ пулă, анчах халăх унта пыма пултараймасть: тинĕс хĕрринче çÿрекен çынна çавăнтах персе пăрахаççĕ.

Хуласемпе ялсенчи пĕтĕм шкулсене хупса пĕтернĕ. Вырăнти интеллигенцие гитлеровецсен приказĕ тăрăх çĕр чавмалли ĕçе ирĕксĕр хăваласа кайнă.

Гитлеровецсем Крымăн кăнтăр çыранĕнчи санаторисене пĕтĕмпех çаратса пĕтернĕ. Мĕнпур хаклă япаласене, сĕтел-пукансене вĕçĕмсĕр турттараççĕ. Ватса пĕтернĕ санаторисен пĕренисемпе чулĕсенчен гитлеровецсем блиндажсем тăваççĕ.

Крымра пурăнакан халăх фашистла захватчиксене чĕререн кураймасть, çавăнпа та тăшмансене хирĕç кĕрешме пĕр минутăлăха та чарăнмасть. Крымăн мухтавлă партизанĕсем çĕрле те кăнтăрла та нимĕçсене канăç памаççĕ. Партизансен çав отрячĕсен речĕсем кунран кун ÿссе пыраççĕ. Кĕрешÿри опыт куллен пуянланать. Ылханлă нимĕç захватчикĕсенчен Крыма ирĕке кăларас сехет инçе маррине вырăнти халăх çирĕппĕн шанса тăрать.

М. ТУРОВСКИЙ.

Ялсовечĕ тасалăхшăн кĕрешет

КАНАШ. Ямашкасси ялсовечĕ тасалăхшăн кĕрешес ĕçе тимлĕн туса пыма тытăнчĕ. Ялсовет исполкомĕ çумĕнче санитари комиссийĕ организациленĕ. Комисси хушнă тăрăх ĕçлеме 30 çынран сануполномоченнăйсем уйăрнă. Ку шутран çуррине яхăн аслă классенче вĕренекен шкул ачисем.

Кашни сануполномоченнăй валли уйрăм участок—темиçе кил уйăрса панă. Çав участоксене сануполномоченнăйсем кашни эрнере пĕр хутчен çÿресе тасалăха тĕрĕслеççĕ. Вĕсем килкартишсене, пÿрт-çуртсене кĕрсе тухса, ăçта мĕнле тасамарлăх пуррисене асăрхаççĕ, çемьери çынсем мĕнле сывлăхлине пĕлсе тăраççĕ, тасамарлăха, тирпейсĕрлĕхе тасатма хушаççĕ, ерекен чирсенчен мĕнле сыхланмаллине вĕрентеççĕ.

Уйрăмăнах Р. Петров, Маслова, Е. Александрова, Прокопьев, Ухъянкина, Кузьмина тата Ф. Иванова сануполномоченнăйсем тăрăшса ĕçленине палăртмалла.

Ямашкасси ялсоветĕнчи санитари комиссийĕ хăйĕн ĕçĕсене лайăх туса пырать.

И. МАКСИМОВ.

Государствăна çăмарта пăраççĕ

СОВЕТСКОЕ. Якимкинăри «Коммунар» колхоз членĕсем государствăна çăмарта парас обязательствăна пурнăçласа пыраççĕ. Л. Федоров, Н. Артемьев, А. Николаева, Н. Андреев колхозниксем государствăна 1942 çулшăн çăмарта памалли обязательствăна çĕр процентпа тултарчĕç. Л. Иванов, Ф. Леонтьев колхозниксем 50-шар çăмарта пачĕç.

С. ФЕДОРОВ.

* * *

ИШЛЕЙ. Чурачăк ялсоветĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз государствăна 1942 çулшăн 200 çăмарта панă.

З. МИТРОФАНОВА.

Вырăс халăхĕн геройла историйĕ çинчен калакан çĕнĕ кĕнеке

К. В. Кудряшов профессор «Пирĕн иртнĕ пурнăçăн паттăр образĕсем» ятлă çĕнĕ кĕнеке çырса пĕтернĕ. Кĕнеке çичĕ сыпăкран тăрать, вĕсем: Пирĕн халăхăн историллĕ опычĕсем; Александр Невский; Димитрий Донской; Мининпа Пожарский; Суворов; Кутузов тата Нахимов çинчен калакан уйрăмсем пулаççĕ.

Кĕнекене массăллă вулакансем валли тесе çырнă. Кĕнекере вырăс халăхĕн историйĕнчи паллă тапхăрсене кăтартакан картинăсем пулаççĕ. Ăна вырăсла чĕлхепе Чăвашиздат пичетлесе кăларать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăвашсен Государство Академиллĕ Театрĕ

МАЙĂН

9-МĔШПЕ 10-МĔШĔНЧЕ

ЧĂВАШЛА СПЕКТАКЛЬ

Премьера

Г. Мдивани

Фронта панă приказ

(7 картинăллă пьеса)

Серго ОРДЖОНИКИДЗЕ рольче — Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ И. О. Молодов.

Каçхине 8 сехет те 30 мин. пуçланать.

Билетсене сутма пуçланă.

ШУПАШКАРТИ ЭРЕХ ЗАВОДНЕ

катка-пичке тума тата киввисене юсама пĕлекенсем

ВАСКАВЛĂН КИРЛĔ

Ĕçукçи—калаçса татăлнă тăрăх.

Хваттер - общежитире

Столовăйра апат çитереççĕ.

Тĕплĕнтерех çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Чувашская урам, 61, эрех завочĕ, заводри главнăй инженер.

Чувашской Республиканской Конторе ТОРГБАНКА

требуются на постоянную работу:

старший инспектор и инспектор по кредитованию торговли и кооперации.

С предложениями обращаться в контору Горгбанка по адресу: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 25, здание Госбанка.

АВТО-МОТОШКОЛА

об"являет набор курсантов на курсы

ШОФЕРОВ-ПРОФЕССИОНАЛОВ.

Занятия начнутся с 10 мая 1942 года.

Заявления подавать начальнику авто-мотошколы по адресу: гор. Чебоксары, ул. Карла Либкнехта, 14.

ИВАНОВСКОМУ ГОСУДАРСТВЕННОМУ КИРПИЧНОМУ ЗАВОДУ

ТРЕБУЮТСЯ

на постоянную работу:

главные бухгалтера, бухгалтера, плановики.

Квартирой обеспечиваются.

КОЗЛОВСКИЙ КОМБИНАТ

на Волге принимает в распиловку лес в неограниченном количестве от организаций и колхозов. Возможно с последующей обработкой (стружка, шпунтовка).

Телеграфный адрес:

Козловка ЧАССР Волга ЗАВОДОУПРАВЛЕНИЕ.

Заем укçи пухаççĕ

ЕТĔРНЕ. Чурпай ялсоветне кĕрекен «Правда» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенче государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне 5 кун хушшинче 93.045 тенкĕлĕх сарнă пулнă, вăл шутран укçине 77.520 тенкĕ пухнă. Заемăн процентлă кăларăмне «Правда» колхоз 6.500 тенкĕлĕх, Киров ячĕпе тăракан колхоз 10.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тÿлесе татнă. Халĕ кунти активистсем заем укçине пĕтĕмпех пухса çитерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Юлашки икĕ кун хушшинче 7.500 тенкĕ пухнă.

И. Т.

* * *

КАНАШ. Ямашкассинчи Дорощин ячĕпе тăракан колхозра çĕнĕ заема 37 пин тенкĕлĕх сарчĕç. Ялти активистсем çийĕнчех подписка укçине пухас ĕçе пуçарса ячĕç. Ку тĕлĕшпе колхоз председателĕпе счетоводĕ пример кăтартрĕç. Колхоз председателĕ И. Кузьмин заема 1.500 тенкĕлĕх, счетоводĕ С. Кузьмин 3.200 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çавăнтах тÿлерĕç. Вĕсем хыççăн ыттисем те тÿлеме тытăнчĕç. Колхозниксенчен заема Ф. Зайцевпа К. Прокопьев юлташсем пиншер тенкĕлĕх, А. Владимирова 700 тенкĕлĕх, В. Еремеев, И. Кондратьев тата ыттисем те 500-шер тенкĕлĕх çырăнса укçине тÿлерĕç. Заем кампанийĕн иккĕмĕш кунĕнчех подписка укçине çурри ытла пухрĕç.

И. МАКСИМОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 134 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64